25-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1943
ЯНВАРЬ
21
КӖҪНЕРНИКУН
16(6253) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

Пирӗн войскӑсем кӑнтӑрта Острогожск, Невинномысск, Пролетарская хулисене, Белокуракино тата Беловодск ятлӑ район центрӗсене йышӑнса илнӗ

I.

Январӗн 20-мӗшӗнче **ВОРОНЕЖ** фронтӗнчи войскӑсем, противникӑн хупӑрласа илнӗ гарнизонӗ хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе, **ОСТРОГОЖСК** хулине йышӑнса илнӗ. Трофейӑсем нумай тытса илнӗ, вӗсен хушшинче автомашинӑсем тиенӗ икӗ эшелон пур.

II.

КӐНТӐР-ХӖВЕЛАНАҪ фронтӗнчи войскӑсем, наступление аталантарса пырса, **БЕЛОКУРАКИНО** ятлӑ район центрне тата пысӑк чугунҫул станцине, **БЕЛОВОДСК** ятлӑ район центрне йышӑнса илнӗ.

III.

КӐНТӐР фронтӗнчи войскӑсем, татӑклӑн атака туса, **ПРОЛЕТАРСКАЯ** хулипе пысӑк чугунҫул станцине тытса илнӗ. Маныч канавӗн ҫурҫӗр ҫыранне нимӗҫсен фашистла войскисенчен пӗтӗмпех тасатнӑ.

IV

КАВКАЗ ЛЕШЬЕНЧИ фронтӑн войскисем вӑйлӑн ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн **НЕВИННОМЫССК** хулипе пысӑк чугунҫул станцине йышӑнса илнӗ.

СОВИНФОРМБЮРО.

ЛЕНИН ЯЛАВӖ АЙӖНЧЕ, СТАЛИН ЕРТСЕ ПЫНИПЕ, ҪӖНТЕРӲ ПАТНЕ—МАЛАЛЛА!

Совет государствине тӑвакан аслӑ Ленин вилнӗренпе вунтӑхӑр ҫул тултарнӑ куна совет халӑхӗ отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ фрончӗсенче пирӗн тӑван ҫӗршывӑн ылханлӑ тӑшманӗсене хирӗҫ — нимӗҫсен фашистла захватчикӗсене хирӗҫ паттӑррӑн ҫапӑҫнӑ вӑхӑтра паллӑ тӑвать.

Пирӗн тӑван ҫӗршывӑн хӑйӗн вӑрӑм кунҫулӗнче нихӑҫан та хальхи пек хаяр та йывӑр тӗрӗслӳ витӗр тухма лекмен. Аслӑ Ленин хушса хӑварнине ҫирӗппӗн пурнӑҫа кӗртсе пынипе, Владимир Ильичӑн чи лайӑх ученикӗ Сталин юлташ ертсе пынипе, совет халӑхӗ ҫав тӗрӗслӗве чыслӑн тӳссе ирттерет.

«Пирӗнтен уйӑрӑлса кайнӑ чухне, Ленин юлташ пире Республикӑсен Союзне тӗреклетсе тата аслӑлатса пыма хушса хӑварчӗ. Тупа тӑватпӑр санӑн умра, Ленин юлташ, эсӗ хушса хӑварнине эпир чыслӑн пурнӑҫа кӗртӗпӗр тесе!» Ҫапла тупа турӗ Ленинӑн шанчӑклӑ ученикӗ Сталин юлташ аслӑ учителӗн тупӑкӗ умӗнче.

Совет Союзӗнчи халӑхсем—вырӑссемпе украинецсем, белоруссемпе литовецсем, латышсемпе эстонецсем, узбексемпе тутарсем, грузинсемпе армянсем, азербайджанецсемпе молдавансем тата Совет Союзӗнчи ытти мӗнпур халӑхсем аслӑ Ленин хушса хӑварнине, Сталин юлташ тупа тунине ҫирӗппӗн пурнӑҫа кӗртсе пычӗҫ, вӗсем ӗмӗр-ӗмӗр иксӗлми аслӑ союз — Советлӑ Социализмлӑ Республикӑсен Союзне туса хучӗҫ.

Пирӗнтен уйӑрӑлса кайнӑ чухне Ленин юлташ пире рабочисемпе хресченсен союзне мӗнпур вӑйран тӗреклетсе пыма хушса хӑварчӗ. Ленин хушса хӑварнине ҫирӗппӗн пурнӑҫа кӗртсе пыма, рабочисемпе хресченсен союзне кунран кун тӗреклетсе пыма тупа туса, Сталин юлташ пирӗн ҫӗршывра рабочи класӑн диктатурине ӳстерсе ҫирӗплетрӗ. Нимӗҫ империалисчӗсем, пирӗн ҫӗршыв ҫине килсе тапӑнса, рабочисемпе хресченсем хушшинче харкашу пуҫласа яма ӗмӗтленни йӑнӑш пулчӗ, ҫав сӗмсӗр ӗмӗт намӑсла путланса ларчӗ.

Халӗ, отечественнӑй вӑрҫӑ кунӗсенче, рабочисемпе хресченсен союзӗ пирӗн фронта, пирӗн паттӑр Хӗрлӗ Ҫарпа Хӗрлӗ Флота ҫӗнтерӳллӗ хӑват парса тӑрать.

Аслӑ Ленина асӑннӑ кун пирӗн Чӑваш республикинчи рабочисемпе колхоз хресченӗсем те, пӗр-пӗринпе туслӑн та таччӑн тӑрса ӗҫлесе, хӑйсем фронта вӑйлӑ пулӑшу парса тӑни ҫинчен каласа пама пултараҫҫӗ. Фронтпа тӑван ҫӗршыва татти-сыпписӗр продукци парса тӑнипе пӗрлех, рабочисемпе колхозниксем хӑйсем ирӗклӗ ӗҫре ӗҫлесе перекетлесе хӑварнӑ укҫа-тенкӗрен Хӗрлӗ Ҫар валли боевой хӗҫпӑшал тума — танксен хӑватлӑ колоннисемпе самолетсен эскадрильисене тума пысӑк пулӑшу параҫҫӗ. Республикӑри ӗҫҫыннисем паянхи кун тӗлне танксен колоннисене тума пӗтӗмпе 45 миллион тенкӗне яхӑн, самолетсен «Комсомолец Чувашии» эскадрильине тума 6 миллион тенкӗне яхӑн хывнӑ. Фронтпа тыл хушшинчи ҫакӑн пек ҫирӗп ҫыхӑну, рабочисемпе хресченсем хушшинчи ҫакӑн пек аслӑ туслӑх—вӑл аслӑ Владимир Ильич хушса хӑварнисене тата халӑхсен ҫулпуҫӗ Сталин юлташ Ленин умӗнче тупа тунине пурнӑҫа кӗртсе пынипе кӑна пулма пултарчӗ.

«Хӗрлӗ Ҫара тӗреклетесси тата унӑн вӑй-халне лайӑхлатасси пирӗн партин чи паха задачисенчен пӗри пулса тӑрать тесе Ленин пире пӗр хут кӑна мар кӑтартса панӑ» (Сталин).

Совет халӑхӗ аслӑ Ленинӑн ҫак кӑтартӑвне, Сталин юлташ ҫак тӗлӗшпе тупа тунине ҫулран-ҫул ҫине тӑрса пурнӑҫа кӗртсе пычӗ. Сталинла индустриализаци политикине, сталинла пиллӗкҫуллӑхсене пурнӑҫа кӗртсе, совет халӑхӗ хӑйӗн тӑван Хӗрлӗ Ҫарне малта пыракан техникӑпа хӗҫпӑшаллантарчӗ, Хӗрлӗ Ҫара хальхи тӗрӗслӳсене чыслӑн тӳссе ирттерме хӑват пачӗ. Совет халӑхӗ ҫитӗнтернӗ Хӗрлӗ Ҫар халӑхӑн пурнӑҫ интересӗсене, тӑван ҫӗршывӑн ирӗклӗхӗпе чыслӑхне, унӑн никама пӑхӑнманлӑхне паттӑррӑн хӳтӗлесе тӑма пултарни — вӑл чи малтан пирӗн Хӗрлӗ Ҫара пӗтӗм халӑх тӗрек парса тӑнинчен килет.

«Пирӗн государствӑна туса хунӑ аслӑ Ленин ҫапла каланӑ: совет ҫыннисен чи кирлӗ пахалӑхӗ вӑл—паттӑрлӑх, хастарлӑх, кӗрешӳре хӑрама пӗлменни, пирӗн тӑван ҫӗршывӑн тӑшманӗсене хирӗҫ халӑхпа пӗрле ҫапӑҫма хатӗр тӑни пулать, тенӗ. Большевикӑн ҫак питех те лайӑх пахалӑхӗ Хӗрлӗ Ҫарти, пирӗн Хӗрлӗ Флотри миллионшар ҫынсен тата Совет Союзӗнчи мӗнпур халӑхсен тивӗҫлӗхӗ пулса тӑни кирлӗ» (Сталин).

Ленин—Сталин партийӗн ҫӗнтерӳллӗ ялавӗ айӗнче пыракан пирӗн Хӗрлӗ Ҫарпа Тинӗс-Ҫар Флочӗ гитлеровецсен тискер кайӑкла кӗтӗвӗсене хирӗҫ вунтӑхӑр уйӑх хушши ӗнтӗ паттӑррӑн тӑрса ҫапӑҫаҫҫӗ. Пирӗн хӗҫпӑшаллӑ вӑйсем фашистсен ҫарӗсене хӑватлӑн пыра-пыра ҫапса халран ячӗҫ, унтан вара иртнӗ ҫулхи ноябрь уйӑхӗнче Сталинград патӗнче наступление куҫрӗҫ. Ҫакӑн хыҫҫӑн геройла Хӗрлӗ Ҫар нимӗҫ захватчикӗсене отечественнӑй вӑрҫӑ фрончӗн ытти участокӗсенче те—Центральнӑй фронтра, Ҫурҫӗр Кавказра, Дон шывӗн вӑтаҫӗрӗнчи районӗнче, Воронежран кӑнтӑралларахра ҫине-ҫинех, татах та хӑватлӑнрах пыра-пыра ҫапрӗ. Совет Информаци Бюровӗ пире ҫӗнӗрен-ҫӗнӗ хыпарсем пӗлтерсе тӑрать.

Ленин кунӗсем ҫывхарса килнӗ тӗле пирӗн Хӗрлӗ Ҫар нумай хуласемпе ялсене ирӗке кӑларчӗ, Ленин хулине нумай уйӑхсем хушши хупӑрласа тӑнӑ фашистла блокадӑна татса ҫӗмӗрчӗ.

Совет Информаци Бюровӗ «Юлашки сехетре» тесе паракан хыпарсем пирӗн халӑхӑн кӗрешӳпе ӗҫри вӑй-хӑватне татах та ытларах ҫӗклеҫҫӗ. Ҫав ырӑ хыпарсене илтлесе, эпир чӗрери тулли шанчӑкпа ҫапла калатпӑр: — Гитлерла захватчиксен юлашки сехечӗ ҫывхарса килет! Пирӗн ҫӗнтерӳ кунӗ—пирӗн аслӑ уяв инҫе мар!

Эпир ҫак хаяр кӗрешӳре хамӑр тӑван ҫӗршывӑн ылханлӑ тӑшманӗсене ҫӗнтеретпӗр. Пире аслӑ Ленинӑн ҫӗнтерӳллӗ ялавӗ ҫул кӑтартса пырать. Пире ҫӗнтерӳ патне Ленинӑн ученикӗ — аслӑ полководец Сталин юлташ ертсе пырать.

СССР Совнаркомӗнче

Совнарком канмалли куна 1943 ҫулхи январӗн 24-мӗшӗнчи вырсарникунран 1943 ҫулхи январӗн 23-мӗшӗнчи шӑматкуна куҫарма йышӑннӑ.

Совет Информаци Бюровӗнчен

Январӗн 19-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Январӗн 19-мӗшӗнче Воронеж фронтӗнчи войскӑсем, наступлени туса пырса, **Валуйки** хулипе пысӑк чугунҫул узелне, **Уразово** хулипе чугунҫул узелне, **Шаталовка** тата **Вейделевка** ятлӑ район центрӗсене тытса илнӗ.

Кӑнтӑр-хӗвеланӑҫ фронтӗнчи войскӑсем татӑклӑн атакӑласа **Каменск** хулине, **Белая Калитва** ятлӑ район центрӗпе пысӑк чугунҫул станцине тата халӑх пурӑнакан темиҫе пысӑк пункта тытса илнӗ.

Ҫурҫӗр Кавказра пирӗн войскӑсем **Петровское** хулипе чугунҫул узелне, **Спицевское** ятлӑ район центрне, **Спицевка, Кугуты, Киан, Дворцовый** ятлӑ чугунҫул станцийӗсене, **Донская Балка, Сухая Буйвола, Георгиевское, Рощинский, Абичехабль** ятлӑ халӑх пурӑнакан пысӑк пунктсене тытса илнӗ.

* * *

Январӗн 18-мӗшӗнче пирӗн авиаци чаҫӗсем фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче нимӗҫсен 15 танкне тата войскӑсемпе грузсем турттарса пыракан 200 автомашинине ҫити пӗтерсе тӑкнӑ е сиенленӗ, артиллерин 8 батарейине пусарса лартнӑ, боеприпассен складне сирпӗнтерсе янӑ, противникӑн пехотине икӗ батальона ҫити сапаласа янӑ, пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Сталинград районӗнче пирӗн войскӑсем нимӗҫсен ҫавӑрса илнӗ фашистла войскисене пӗтерсе пынӑ. Хуларан хӗвеланӑҫнерехре пирӗн чаҫсем малалла куҫнӑ, 800 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ. 329 ҫынна тыткӑна илнӗ. 9 самолет, 12 танкпа бронемашина, темиҫе ҫӗр автомашина, 244 пулемет тата ытти трофейӑсем те тытса илнӗ. Хулара пирӗн штурмлакан отрядсем противникӑн тӗреклетнӗ позицийӗсене тытса илнӗ.

* * *

Кӑнтӑр фронтӗнче пирӗн войскӑсем наступлени туса пынӑ. Орловскаяран кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехри районра халӑх пурӑнакан пысӑк пунктшӑн хӗрӳллӗ ҫапӑҫусем пыраҫҫӗ. Тепӗр участокра пирӗн чаҫсем противникӑн ҫавӑрса илнӗ войскисен группине пӗтерсе тӑкасшӑн ҫапӑҫаҫҫӗ.

* * *

Кӑнтӑр-хӗвеланӑҫ фронтӗнче пирӗн войскӑсем халӑх пурӑнакан темиҫе пункта йышӑнса илнӗ. Пӗр районра нимӗҫсем хӑйсен ҫавӑрса илнӗ гарнизонне ҫӑлма пехотӑпа танксем нумай янӑ. Пирӗн чаҫсем противникӑн темиҫе контратакине сирсе янӑ. Вӑйлӑ ҫапӑҫусенче нимӗҫ пехотин полкне пӗтерсе тӑкнӑ. Миллерово хулинче гитлеровецсем хӑйсен 500 аманнӑ салтакне пӑрахса хӑварнӑ. Хулара тӑшманӑн 3.000 виллине ҫити выртса юлнӑ. Нимӗҫсен 950 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ. Ҫакӑн пек трофейӑсем тытса илнӗ: 11 танк, 17 самолет, 58 оруди, 840 автомашина, продовольствин 10 складне, эрех хунӑ икӗ склада, япаласен пӗр складне, тӗрлӗ грузсем тиенӗ поездсене, горючи тултарнӑ 1.000 пичке тата ытти тӗрлӗ ҫар пурлӑхӗсем тытса илнӗ.

* * *

Воронеж фронтӗнчи войскӑсем ӑнӑҫлӑн наступлени туса пынӑ. Острогожскра ҫавӑрса илнӗ нимӗҫ гарнизонӗ ҫав хуларан тухса кайма темиҫе хут та хӑтланса пӑхнӑ. Гитлеровецсен пур контратакисене те сирсе янӑ, вӗсене пысӑк ҫухатусем тӳстернӗ. Постоялый ятлӑ халӑх пурӑнакан пункт районӗнче пирӗн ҫӑмӑллӑн куҫакан чаҫсем икӗ сехет хушши ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн итальянецсен 5.000 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ. Алексеевка ятлӑ халӑх пурӑнакан пункт районӗнче пирӗн подразделенисем итальянецсен йышлӑ автоколоннине атакӑланӑ. Итальянецсем начар хирӗҫ тӑнӑ, часах вара парӑннӑ. Пирӗннисем 700 автомашина тытса илнӗ. Совет боецӗсем ҫав тытса илнӗ машинӑсем ҫине ларнӑ та противника малалла хӑваланӑ.

* * *

Ладога кӳллинчен кӑнтӑртарахра пирӗн войскӑсем наступлениллӗ хаяр ҫапӑҫусем туса пынӑ. Н-ски чаҫӑн боецӗсем вӑйлӑн ҫапӑҫса малалла куҫнӑ та противникӑн боеприпассемпе продовольстви хунӑ 4 складне, 20 автомашинине тата ытти тӗрлӗ трофейӑсем те тытса илнӗ. Трубачев юлташ ертсе пыракан часть, нимӗҫсен Шлиссельбургри группировкине ҫапса аркатнӑскер, нумай ҫынна тыткӑна илнӗ, вӗсем хушшинче нимӗҫ батальонӗн командирӗ те пур.

* * *

Великие Луки хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн чаҫсем халӑх пурӑнакан темиҫе пункта нимӗҫсенчен тасатнӑ. Максимов юлташ ертсе пыракан боецсем противникӑн контратакине сирсе янӑ, 300 гитлеровеца вӗлернӗ тата нимӗҫсен 7 танкне ҫунтарса янӑ.

* * *

Ҫурҫӗр Кавказра пирӗн войскӑсем Черкесск хулине илсен Кубань шывӗ урлӑ каҫнӑ. Противник вӑйлӑн хирӗҫ тӑрать. Совет чаҫӗсем, тӑшманӑн чӗрӗ вӑйӗпе техникине пӗтерсе пырса, малалла каяҫҫӗ, вӗсем халӑх пурӑнакан темиҫе пункта тытса илнӗ. Черкесск хулинче ҫакӑн пек трофейӑсем тытса илнӗ: орудисем — 54, пулеметсем — 195, минометсем — 48, ҫав шутра ултӑ кӗпҫеллӗ минометсем—22, винтовкӑсем — 700 ытла, радиостанцисем — 5, боеприпассен склачӗсем — 2, штабӑн документсем тиенӗ машини, полк ялавӗ тата ытти тӗрлӗ ҫар пурлӑхӗсем тытса илнӗ.

* * *

Смоленск облаҫӗнчи партизансен отрячӗ нимӗҫ аэродромне тапӑннӑ. Совет патриочӗсем пикировка тӑвакан 6 бомбардировщика, 2 истребителе, 2 разведчика тата противникӑн 4 транспортнӑй самолетне пӗтерсе тӑкнӑ. Нимӗҫсен летчикӗсене тата аэродромри командине 62 салтакпа офицера вӗлернӗ е амантнӑ.

Январӗн 20-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Январӗн 20-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле пирӗн войскӑсем **Сталинград** районӗнче, **Воронежран** кӑнтӑртарахра, **Ҫурҫӗр Кавказра, Анатри Дон** тата **Ҫурҫӗр Донец** районӗсенче, **Ладога** кӳллинчен кӑнтӑртарахра малтанхи еннеллех ҫапӑҫусем туса пынӑ.

* * *

Сталинград районӗнче хуларан хӗвеланӑҫнерехре кӗрешекен пӗр часть вӑйлӑн ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн противникӑн тӗреклетнӗ чылай позицийӗсене йышӑнса илнӗ. 300 гитлеровеца вӗлерсе пӗтернӗ. Нимӗҫсен 50 салтакӗпе офицерне тыткӑна илнӗ. Ҫӗр ӑшне чавса лартнӑ темиҫе танка, ултӑ склад тата ытти трофейӑсем тытса илнӗ.

* * *

Кӑнтӑр фронтӗнче пирӗн войскӑсем, противник вӑйлӑн хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе тата унӑн контратакисене сирсе пырса, малалла наступлени туса пынӑ. Маныч юханшывӗ урлӑ каҫнӑ пирӗн чаҫсем халӑх пурӑнакан темиҫе пункта йышӑнса илнӗ. Халӑх пурӑнакан ҫав пунктсенчен пӗриншӗн пынӑ ҫапӑҫура гитлеровецсен икӗ ротине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Танк, 4 оруди, 13 пулемет, боеприпассен 2 складне тата 14 автомашина тытса илнӗ.

* * *

Кӑнтӑр-Хӗвеланӑҫ фронтӗнче пирӗн войскӑсем малалла куҫса пынӑ. Пӗр участокра пирӗн танковӑй тата моторизованнӑй подразделенисем противникӑн тылне кӗрсе кайнӑ та ҫӗр каҫиччен нимӗҫсен 5 танкне, 12 противотанковӑй орудине тата 30 автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ. Тепӗр участокра. Ҫурҫӗр Донец районӗнче, пирӗн чаҫсем халӑх пурӑнакан темиҫе пункта йышӑнса илнӗ. Нимӗҫсен 600 ҫити салтакӗпе офицерне вӗлерсе пӗтернӗ, тӑшманӑн 8 танкне ҫунтарса янӑ тата персе ҫӗмӗрнӗ. Трофейӑсем тытса илнӗ, тыткӑна илнисем пур.

* * *

Воронеж фронтӗнчи войскӑсем ӑнӑҫлӑн наступлени туса пынӑ тата тӑшманӑн ҫавӑрса илнӗ дивизийӗсене хӗссе пынӑ. Бешко юлташ ертсе пыракан гвардеецсем халӑх пурӑнакан чылай пунктсене йышӑнса илнӗ. Халӑх пурӑнакан ҫав пунктсемшӗн пынӑ ҫапӑҫусенче 800 гитлеровеца ытла вӗлерсе пӗтернӗ. 308 ҫынна тыткӑна илнӗ. Тӗрлӗ калибрлӑ 47 оруди, 62 ручной пулемет тата 28 станковӑй пулемет тытса илнӗ. Тепӗр участокра пирӗн войскӑсем итальянецсен нумай салтакӗсемпе офицерӗсене тыткӑна илнӗ.

* * *

Великие Луки хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн чаҫсем халӑх пурӑнакан 5 пункта тытса илнӗ. Ҫапӑҫу хирӗнче противникӑн ҫӗршер салтакӗпе офицерӗ вилсе юлнӑ. Кунсӑр пуҫне, нимӗҫсен 20 танкне тата 10 орудине пӗтерсе тӑкнӑ. Ржевран хӗвеланӑҫнерехре Гришин юлташ ертсе пыракан артиллери чаҫӗ, противник пухӑнса тӑнӑ ҫӗре тупӑсенчен персе, тӑшманӑн 2 танкне, унӑн артиллерийӗн 2 батарейине пӗтерсе тӑкнӑ тата пехотӑн пӗр батальонне сапаласа янӑ. Совет лет-

(Вӗҫӗ 2-мӗш страницӑра).

В. И. Ленин кунӗсем республикӑра

ЕТӖРНЕ, январӗн 20-мӗшӗ. (**Телефонпа**). Районри партипе совет организацийӗсем пирӗн аслӑ ҫулпуҫ Владимир Ильич Ленин вилнӗренпе 19 ҫул тултарнине паллӑ тӑваҫҫӗ. Ӗнер район центрӗнче агитколлектив руководителӗсен, партипе комсомол организаци секретарӗсен инструктивлӑ канашлӑвӗ пулса иртрӗ. Канашлура пулнисем В. И. Ленинӑн пурнӑҫӗпе ӗҫӗсем ҫинчен колхозниксене каласа пама паян ялсене тухса кайрӗҫ.

Январӗн 21-мӗшӗнче каҫхине район центрӗнче партипе совет организацийӗсен, предприятисенчи стахановецсен траурлӑ ларӑвӗ пулса иртет.

* * *

КУСЛАВККА, январӗн 20-мӗшӗ. (**Телефонпа**). ВКП(б) Обкомӗн лекторӗ Иванов юлташ предприятисенчи рабочисем хушшинче В. И. Ленинӑн пурнӑҫӗпе кӗрешӗвӗсем ҫинчен докладсемпе калаҫусем ирттерчӗ.

Район центрӗнче агитаторсемпе вулавҫӑсен, партипе комсомол организаци секретарӗсен инструктивлӑ канашлӑвӗ пулса иртрӗ.

Парти кабинетӗнче В. И. Ленинӑн пурнӑҫӗпе ӗҫӗсене кӑтартакан выставка уҫнӑ.

* * *

СӖНТӖР, январӗн 20-мӗшӗ. (**Телефонпа**). Ӗнер агитаторсемпе парторганизаци секретарӗсен районри канашлӑвӗ пулса иртрӗ. Унта ВКП(б) Обкомӗн лекторӗ Волков юлташ: «19 ҫул Ленинсӑр, Ленин ҫулӗпе, Сталин юлташ ертсе пынипе» тема тӑрӑх доклад туса пачӗ. Халӗ докладчиксемпе агитаторсем Ленин кунне ялсенче паллӑ тӑвас тӗлӗшпе ӗҫлеҫҫӗ.

Январӗн 22-мӗшӗнче район центрӗнче ӗҫҫыннисен траурлӑ ларӑвӗ пулать.

А. СОЛОВЬЕВ.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотине пани

Январӗн 18-мӗшӗнче Шупашкарта Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн председателӗ З. А. Андреева юлташ республикӑри предприятисен малта пыракан работникӗсене Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотине пачӗ.

Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртура ҫитӗнӳсем тунӑшӑн Хисеплӗ грамотӑна Н-ски заводри рабочисем, инженерла-техникла тата ертсе пыракан работниксем илчӗҫ. Награда илнисем хушшинче: завод директорӗн строительство енӗпе ӗҫлекен заместителӗ В. И. Уральский, ӗҫпе кадрсен отделӗн начальникӗ В. И. Борох, главнӑй механик М. М. Гуревич, механически цех начальникӗ В. И. Златопольский, цех начальникӗ А. Л. Кинзбургский, гараж начальникӗ В. В. Лещевский, юлташсем пур.

Производствӑра вӑя шеллемесӗр, вӑхӑта пӗлмесӗр ӗҫленӗшӗн Хисеплӗ грамотӑна прессовщица А. И. Ильина, формировщица У. И. Куракова, слесарь А. К. Киреев, токарь В. О. Лютермозер, токарь Г. Д. Редькин, монтажница Е. Н. Стреляная, маляр И. К. Трубачев, рабочи Ф. Г. Сеньков тата ытти работниксем те илчӗҫ.

Н-ски заводри награда илнӗ рабочисен, инженерла-техникла тата ертсе пыракан работниксен ячӗпе А. И. Якунин юлташ сӑмах каларӗ. Вӑл хӑйӗн сӑмахӗнче правительствӑна чӗререн тав турӗ, малашне татах та лайӑхрах ӗҫлеме сӑмах пачӗ.

Строительство ӗҫне активлӑн хутшӑннӑшӑн Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотине Чӑваш АССР Совнарком Председателӗн заместителӗ Ф. В. Васильев юлташ илчӗ.

Хисеплӗ грамотӑна ҫавӑн пекех Чӑваш АССР Шалти Ӗҫсен Халӑх Комиссариачӗн уйрӑмах палӑрнӑ работникӗсем: С. И. Иванов, А. Г. Ксенофонтов, А. Н. Николаев, Г. Ф. Филиппов, Р. Ф. Шихранов т. ыт. юлташсем те илчӗҫ.

Промышленность продукцине туса кӑларас тӗлӗшпе Правительство панӑ заданисене ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртнӗшӗн Чӑваш АССР Шалти Ӗҫсен Халӑх Комиссариачӗн промколонийӗпе ОИТК-н уйрӑмах палӑрнӑ работникӗсем: А. М. Бойков, П. И. Кривов, В. И. Смирнов, П. Б. Юдаков юлташсем те Хисеплӗ грамота илчӗҫ.

Чӑваш АССР Шалти Ӗҫсен Халӑх Комиссариачӗн награда илнӗ работникӗсен ячӗпе П. Б. Юдаков юлташ сӑмах каларӗ:

— 1942 ҫулхи производство планне эпир ытлашшипех тултартӑмӑр. Хӗрлӗ Ҫар 25 ҫул тултарнӑ ятпа пыракан социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнса, 1943 ҫулхи производство планне 150 процент тултарма пултӑмар. Ҫак обязательствӑна ӑнӑҫлӑн пурнӑҫа кӗртетпӗр тесе эпир правительствӑна шантаратпӑр.

Хисеплӗ грамотӑна парса пӗтернӗ хыҫҫӑн Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн председателӗ З. А. Андреева юлташ сӑмах каларӗ. З. А. Андреева юлташ награда илнисене саламларӗ тата малашнехи ӗҫре ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тума, Хӗрлӗ Ҫара пулӑшассине вӑйлатма чӗнчӗ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Январĕн 20-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

...чикĕсем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 5 самолетне персе ÿкернĕ.

* * *

Çурçĕр Кавказра пирĕн войскăсем çапăçусем туса пырса малалла куçнă тата халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илнĕ. Пĕр часть тăшманăн чакмалли çулне татнă та çĕрлехи çапăçусенче нимĕç пехотин ротине çĕмĕрсе тăкнă. 5 танк тата 12 автомашина тытса илнĕ. Тыткăна илнисем пур. Тепĕр участокра пирĕн кавалеристсен отрячĕ противникăн тылне çĕмĕрсе кĕрсе кайнă, сисмен çĕртен тапăнса, гитлеровецсем хушшинче паника кăларса янă. 100 нимĕçе яхăн вĕлерсе пĕтерсе, отряд хăйĕн чаçĕпе пĕрлешнĕ.

* * *

Ладога кÿллинчен кăнтăртарахра пирĕн войскăсем малалла наступлени туса пынă. Пĕр часть противник оборонин вăйлăн тĕреклетнĕ узелне йышăнса илнĕ. 12 дзота тата 19 блиндажа аркатнă. 5 оруди тата 11 пулемет пĕтерсе тăкнă. Танк, 14 оруди, 33 пулемет, 35 автомат, 318 винтовка, боеприпассен складне, продовольстви складне тата ытти трофейăсем те тытса илнĕ.

* * *

Краснодар крайĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсем йышăннă халăх пурăнакан пункта çĕрле пырса тапăннă. Партизансем вуншар гитлеровецсене вĕлерсе пĕтернĕ, çăмăл машина, станковăй пулемет, 40 винтовка тата 3.000 патрон тытса илнĕ.

* * *

Югославири партизансем, вăйлăн çапăçнă хыççăн, Ясеница тата Лика местечкисене йышăннă. 200 гитлеровеца тыткăна илнĕ. 2 миномет, 5 пулемет, 200 винтовка тата ытти çар пурлăхĕсем тытса илнĕ. Загреб — Белавар районĕнче кĕрешекен партизансем тăшманăн 140 салтакне тата 17 офицерне вĕлерсе пĕтернĕ, противникăн 3 поездне сирпĕнтерсе янă. Адриатика тинĕсĕн кăнтăр пайĕнче партизан-моряксем итальянецсен продовольстви тиенĕ пысăках мар 5 карапне тытса илнĕ.

Ялхуçалăх машинисене вăхăтра тата пысăк пахалăхпа юсаса хатĕрлесси—тимĕрçĕсен хисеплĕ тивĕçĕ

Красноармейски районри Упи ялсоветĕнчи „Янмурзино“ колхоз тимĕрçи Чăваш республикинчи колхоз тимĕрçисем патне çырнă çыру

Тимĕрçĕ юлташсем!

Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче хаяр çапăçусем пыраççĕ. Тăшман хирĕç тăнине çĕмĕре-çĕмĕре тăкса, пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар малалла наступлени туса пырать. Хĕрлĕ Çарăн çĕнтерÿвĕсем пире вĕçĕмсĕр савăнтараççĕ, фронта пулăшас ĕçе вăйлатма хавхалантараççĕ.

Сталин юлташ хăйĕн доклачĕпе приказĕнче лартнă задачăсене пурнăçа кĕртме пирĕн пĕтĕм çĕршыв çĕкленчĕ. Пирĕн кашни ĕççынни, вăл кирек мĕнле ĕçре пулсан та, Хĕрлĕ Çара пулăшас ĕçе хăйĕн пĕтĕм вăйне, пĕтĕм пултарулăхне пама тăрăшать.

Халĕ колхозлă ял вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш çуракине хатĕрленет. Колхозсем умĕнче ялхуçалăх машинисене юсас, транспорт инвентарĕсене юсаса е çĕнĕрен туса хатĕрлес задача тăрать. Анчах, паллă ĕнтĕ, пирĕн колхозсенче чылайĕшĕнче тимĕрçĕсем çук. Вĕсем фронтра пирĕн тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕшĕн, пирĕн телейлĕ пурнăçшăн хăйсене шеллемесĕр çапăçаççĕ.

Эпир, колхозсенчи тимĕрçĕсем, çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе колхозсене пысăк пулăшу пама пултаратпăр. Çуракине ăнăçлăн тата кĕске вăхăтра туса ирттересси — ялхуçалăх машинисем хатĕр пулнинчен нумай килет. Çавăнпа та пирĕн машинăсене юсас ĕçе пĕтĕм вăйпа тытăнас пулать.

Эпĕ, Красноармейски районри Упи ялсоветне кĕрекен «Янмурзино» колхоз тимĕрçи, хамăр колхозăн ялхуçалăх машинисене январĕн 10-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех юсаса çитертĕм. Пурĕ 30 плуг, 4 сеялка юсаса лартрăм. Халĕ çывăхри колхозсен — Байсубино ялсоветĕнчи «Жнейка», «Красноармеец», Молотов ячĕпе тăракан колхозсен, Алманчă ялсоветĕнчи «Родина» колхозăн плугĕсене, сеялкисене, сÿрисене юсатăп. Эпĕ çуракине тухиччен пĕтĕмпе 150 плуг юсаса пама пулатăп. Çак вăхăтра, хампа пĕрле ĕçлеттерсе, тимĕрçĕ пулма 3 çынна вĕрентсе хатĕрлетĕп.

Республикăри мĕнпур тимĕрçĕсене эпĕ çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе социализмлă ăмăртăва хутшăнма, фронтри пек хастарлăн ĕçлеме чĕнетĕп. Колхозсене ялхуçалăх машинисем çителĕклĕ тата пысăк пахалăхпа юсаса парар!

Тимĕрçĕ юлташсем! Мăлатуксене çирĕпрех тытар, эпир туптанă кашни тимĕр нимĕçсен фашистла бандисене çĕмĕрсе тăкас ĕçе хăвăртлаттăр!

ЛАВРЕНТИЙ ГОРДЕЕВ,
Упи ялсоветĕнчи «Янмурзино» колхоз тимĕрçи.

Мари республикин делегацийĕ Чăваш республикинче

Çак кунсенче Мари республикин делегацийĕ пирĕн республикăри районсенче пулчĕ. Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан тата Молотов ячĕпе тăракан, «Майăн 1-мĕшĕ», Киров ячĕпе тăракан колхозсенче тата Шупашкар районĕнчи «Осоавиахим», «Молния», «Кормилец» колхозсенче пулса, делегаци çак колхозсем социализмлă ăмăртура илнĕ обязательствăсене мĕнле пурнăçласа пынипе паллашрĕ, ĕçри çитĕнÿсемпе çитменлĕхсене палăртрĕ.

Делегаци Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан тата Шупашкар районĕнчи «Осоавиахим» колхозсем уйрăмах лайăх ĕçленине палăртрĕ. «Осоавиахим» колхоз 1942 çулта вăтам шутпа кашни гектартан 21 центнер тĕштырă туса илнĕ. Кунсăр пуçне, делегаци Вăрнар районĕнчи Сталин, Молотов тата Киров ячĕсемпе тăракан, «Майăн 1-мĕшĕ» колхозсем вырăнти удобренисем хатĕрлесе уя турттарас тĕлĕшпе лайăх ĕçленине палăртрĕ.

Делегаци январĕн 20-мĕшĕнче Мари республикине тухса кайрĕ.

Самолетсен „Комсомолец Чувашии“ эскадрильине тума 5.800.000 тенкĕ пухнă

Самолетсен «Комсомолец Чувашии» эскадрильине тума укçа пухас ĕç республикăра малалла пырать. Январĕн 19-мĕшĕ тĕлне республикăри комсомолецсемпе çамрăксем çак ĕç валли пурĕ 5.800.000 тенкĕ пухнă. Вăл шутран Чкаловски район (ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ Черенкова юлташ) —715 пин тенкĕ, Вăрнар районĕ (Поляева юлташ) — 230 пин тенкĕ, Октябрьски район (Чурмакова юлташ)—219 пин тенкĕ, Вăрмар районĕ (Залевский юлташ) — 201 пин тенкĕ тата Шупашкар хулинчи комсомолецсемпе çамрăксем (ВЛКСМ хула комитечĕн секретарĕ Охандерова юлташ) — 428.686 тенкĕ пухнă.

Анчах самолетсем тума укçа пухас ĕç пур районсенче те çителĕклĕ пырать теме çук-ха. Кувакино, Тăвай, Йĕпреç тата Сĕнтĕрвăрри районĕсенчи комсомол организацисем çак ĕçе тивĕçлипе ертсе пымаççĕ.

* * *

Шупашкарти комсомолецсемпе çамрăксем хушшинче самолетсен «Комсомолец Чувашии» эскадрильине тума укçа пухас ĕç хĕрÿллĕн пырать. Январĕн 20-мĕшĕ тĕлне вĕсем пурĕ 428.686 тенкĕ пухса банка хывнă.

Самолетсем валли укçа пухас ĕçре Верблювская юлташ ертсе пыракан организацири комсомолецсемпе çамрăксем пример кăтартаççĕ. Вĕсем 161.640 тенкĕ пухса панă. Комсомолка Орленко юлташ 350 тенкĕ, Антонова, Кузьмина, Чиркова тата Шипунова юлташсем 300-шер тенкĕ хывнă. Самолетсем тума Чăваш АССР Финанс Халăх Комиссариатĕнчи работниксем 15.315 тенкĕ, Чăвашсоюзри работниксем 5.950 тенкĕ, Н-ски госпитальри служащисемпе боецсем 7.085 тенкĕ пухса панă.

Çак ĕçе вĕренекенсемпе пионерсем те хутшăнаççĕ. Хулари 4-мĕш номерлĕ шкул ачисем 2.745 тенкĕ пухса панă. Граждăн вăрçи геройĕн Пархоменкăн внукĕ, 1-мĕш «А» класра вĕренекен Саша Пархоменко—100 тенкĕ панă.

* * *

СЕНТЕРВАРРИ. Чкаловски районри «РОКК» колхозри комсомолецсемпе çамрăксен чĕнĕвĕ çине ответлесе, районра самолетсен «Комсомолец Чувашии» эскадрильине тума укçа пухас ĕç сарăлса пырать. Шуркасси ялсоветĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхоз çамрăкĕсем çак ĕç валли 75.000 тенкĕ пухса панă. Вăл шутран колхоз председателĕ Логинов юлташ 2.000 тенкĕ, бригадир Павлов —1.000 тенкĕ, колхозниксем Алексеев, Ласков тата В. Логинов юлташсем 250-шар тенкĕ панă.

Чăваш комсомолĕ ячĕпе тăракан самолетсем тума, çавăн пекех, Новинскри Сталин ячĕпе тăракан колхоз çамрăкĕсем 50.000 тенкĕ, Кĕçĕн Маклашкинăри «Красная Армия» колхоз çамрăкĕсем 40.000 тенкĕ хывнă.

Н. КОНСТАНТИНОВ.

* * *

ОКТЯБРЬСКОЕ. (Телефонпа). «РОКК» колхозри комсомолецсем пуçарнине ырласа, Октябрьскинчи вăтам шкулта вĕренекен комсомолецсем «Комсомолец Чувашии» ятлă самолетсен эскадрильине тума укçа пухрĕç. Вишневский, Воронов, Ванюшин—50-шар тенкĕ, Кожанов, Яндралова 30-шар тенкĕ пачĕç т. ыт. те. Учительсемпе учительницăсем хăйсен уйăхри ĕçукçин çуррине хыврĕç. Шкулта вĕренекенсем пĕтĕмпе 2.000 тенкĕ ытла пухса Госбанк отделенине хыврĕç. Укçа пухасси малалла пырать.

Ф. МЕДЯКОВ.

КАШНИ РАБОЧИ НОРМĂНА ТУЛТАРАССИШĔН КĔРЕШЕТ

КУСЛАВККА, январĕн 20-мĕшĕ. (Телефонпа). Иртнĕ çулхи декабрь уйăхĕнче комбинатри рабочисемпе работницăсем пурте пекех нормăна тултарса ĕçленĕ. Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнса, нормăна пур рабочисем те тултарма пулнă. Халĕ рабочисем хăйсен çак обязательствине пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешеççĕ. Мастерсем юлса пыракан рабочисене тухăçлăрах ĕçлеме вĕрентеççĕ, стахановецсем хăйсен ĕç тухăçлăхне ÿстерсех пыраççĕ. Станочница Ефремова, слесарь Мирончик юлташсем нормăна кулленех виçĕ хут ирттерсе тултараççĕ.

В. НОВИКОВ,
Завком председателĕ.

Ĕç тухăçлăхне ÿстерме пулчĕç

Малта пыракан 172-мĕш номерлĕ завод коллективĕ чĕнсе каланине Шупашкарти предприятисемпе артельсенче ĕçлекенсем ырласа кĕтсе илчĕç. Хĕрлĕ Çар 25 çул тултарнă ятпа пыракан социализмлă ăмăртăва хутшăнса, хулари предприятисемпе артельсен коллективĕсем татăклă обязательствăсем илчĕç. «Пекарь» артельри рабочисемпе служащисем, ертсе пыракан работниксем çакăн пек обязательствăсем илнĕ:

январь уйăхĕнчи производство планне пĕтĕмĕшпех тултармалла;

топливăна уйăхсерен 3 процент перекетлесе пымалла;

таварăн хăйне ларакан хакне ĕçмелли япаласем енĕпе 5 процент, çăкăр пĕçерес енĕпе 1 процент тата çĕлесе тунă япаласем енĕпе 2 процент чакармалла;

ĕç тухăçлăхне ĕçмелли япаласем туса кăларас енĕпе 10 процент, çĕлесе тунă япаласем енĕпе 5 процент тата çăкăр пĕçерес енĕпе 3 процент ÿстермелле.

Артель коллективĕ ĕç хатĕрĕсене типтерлĕ тыткалас, ĕç вăхăчĕпе туллин усă курас тĕлĕшпе те чылай ĕçсем палăртнă.

Артельри рабочисемпе работницăсем тата мастерсем çак обязательствăсене пурнăçа кĕртессишĕн тимлĕн ĕçleme тытăнчĕç.

Юрăпа ташă ансамблĕ фронта каять

Паян, январĕн 21-мĕшĕнче, чăвашсен юрăпа ташă ансамблĕ пирĕн геройла Хĕрлĕ Çарăн боецĕсемпе командирĕсем валли концертсем пама фронта тухса каять. Эпир телейлĕ, пирĕн çине пысăк шанчăк хучĕç. Фронта эпир тĕрлĕ енлĕ программа илсе каятпăр. Пирĕн репертуарта чăваш композиторĕсем çырнă юрăсем, чăваш юррисемпе ташшисем пур. Çавăн пекех пирĕн программăна вырăс композиторĕсем çырнă юрăсене, вырăс халăхĕн тата ытти тăванла халăхсен юрри-ташшисене, классикла произведенисене кĕртнĕ. Эпир фронтра мартăн 1-мĕшĕччен пулатпăр. Хамăр çине хунă шанăçа тÿрре кăларас тесе, Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе командирĕсене хăйĕн искусствипе хавхалантарас тесе, пирĕн коллектив пĕтĕм вăйне хурса тăрăшĕ.

Ф. ЛУКИН,
Юрăпа ташă ансамблĕн художествăллă руководителĕ.

Ют çĕршывсенче

АМЕРИКАРИ ПĔРЛЕШУЛЛĔ ШТАТСЕН СЫВЛАШ-ÇАР ВАЙĔСЕМ. **Ÿкерчĕк çинче:** Пулăшса тăракан хĕрарăмсен авиаотрячĕ аэродромра. Хĕрарăм-летчиксем самолетсене завод аэродромĕсем çинчен авиаци базисене çитерсе тăраççĕ.

АНГЛИ АРМИЙĔ ТРИПОЛИТАНИРЕ НАСТУПЛЕНИ ТУНИ

ЛОНДОН, январĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Каиртан çапла пĕлтерет: Англин 8-мĕш армийĕ Мисуратăран иртсе Злитен районне çитнĕ.

Агентствăн тепĕр пĕлтерĕвĕнче çапла каланă: 8-мĕш арми фронтăн пур участокĕнче те наступлени тăвать. Вăл фронт талккăшĕпех, Бени-Улидаран пуçласа тинĕс хĕрринчи районра ларакан Таубрги патне çитиччен, 60—70 миля малалла кайнă. Противник хăй хыççăн çула минăласа хăварать. Англи войскисем сехетре пĕр миля ытла малалла кайса пыраççĕ. Англин çухатăвĕсем питĕ сахал тесе шутлаççĕ. Çанталăк Англин бронетанковăй вăйĕсене пулăшса тăрать.

Триполитанире противника атакăлакан англичансем сывлăшра пуç пулса тăраççĕ. Тĕнĕл держависен авиацийĕ войскăсене хÿтĕлес ĕçе çеç туса тăрать. Ĕнер кунĕпех тăшманăн войскисене самолетсем çинчен пенĕ, çав самолетсем вĕсем январĕн 15-мĕшĕнче кăна тăшман позицийĕсен тылĕнче пулнă площадкăсем çинчен вĕçсе тухаççĕ.

ФРАНЦИ ПАТРИОЧĔСЕН КĔРЕШĔВĔ

ЛОНДОН, январĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Кĕрешекен Францин руководителĕсем Монлюсонра пысăк демонстраци пулса иртни çинчен хыпар илнĕ, çав демонстраци вăл нимĕçсем 300 француз рабочине Германие яма хăтланнă чухне пулса иртнĕ. Рабочисене ирĕксĕр Германие яма хăтланни çинчен пĕлсен, темиçе пин француз вокзала тата перрона пырса тулнă, вĕсем «Марсельеза» юрласа, «Лавале вилĕм!». «Сывă пултăр де Голль» тесе кăшкăрса, вагонсем патнелле кайнă. Демонстрантсен пĕр ушкăнĕ вокзала пымалли вырăнсене йышăннă. Нимĕçсен моторизованнăй хуралĕ вокзала пынă та пухăннă çынсене прикладсемпе çапса хăвалама тытăннă. Нимĕçсемпе французсем хушшинче тытăçу пуçланса кайнă. Çавăнпа усă курса Германие яма илсе пынă рабочисем тарса саланнă.

ВЕНГРИРЕ 667 АНТИФАШИСТА СУД ТĂВАÇÇĔ

АНКАРА, январĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Анатоли агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Будапештра тата Венгрин ытти хăшпĕр хулисенче 667 антифашиста суд тума пуçланă. Вĕсене пурне те вăрттăн ĕçлекен организацисем тунă тесе тата пăлхав тума хатĕрленнĕ тесе айăплаççĕ.

ГИТЛЕРЛА ХАÇАТ ЛИТОВЕЦСЕМ ПАРАНМАН ПИРКИ ТАРĂХАТЬ

СТОКГОЛЬМ, январĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейче цейтунг инд Остланд» ятлă гитлерла хаçат нимĕçсем оккупациленĕ Литва ССР-ĕнчи лару-тăру çинчен статья пичетлесе кăларнă. Çав статьяра вăл литовецсем оккупациллĕ влаçсен пур мероприятийĕсене те саботаж тунă пирки тарăхать. «Халăх влаçсен пур распоряженийĕсене те яланах хытă пăснине палăртма тивет, çакă вăл Германин фрончĕпе тылне кирлĕ япаласем парса тăрас ĕçе хăратса тăрать», тет хаçат. Хаçат Литва халăхне çавăн пек хăтланни çĕнĕ асапсем патне илсе пыма çеç пултарать, тесе хăратать. Хаçат çапла калать: влаçсен распоряженийĕсене пурнăçа кĕртмен çынсене «тăшманла агитаторсемпе хĕтĕртекенсем» тесе шутлаççĕ, вĕсене вăрçă вăхăтĕнчи законсем тăрăх айăплаççĕ, урăхла каласан — вĕлереççĕ, тет.

ГЕРМАНИ АВИАЦИЙĔ ЛОНДОНА ТАПАННИ ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, январĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: илнĕ хыпарсем тăрăх, январĕн 18-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Лондона Германин 50—60 самолечĕ тапăннă. Пĕрремĕш хут 25—30 самолет тапăннă, вĕсем Лондон районне 20 сехетпе 22 сехет хушшинче вĕçсе пынă. Çав самолетсенчен сахаллăшĕ çеç хула тĕлне вĕçсе тухнă. Стратеги тĕлĕшĕнчен паха объектсем сиенленмен. Халăх пурăнакан кварталсенче жертвăсем пур, хулан промышленноçлă районĕсенче самолетсем кÿнĕ сиен пысăк мар. Иккĕмĕш хутĕнче те çавăн чухлех самолет вĕçсе пырса тапăннă. Анчах çав хутĕнче те хула тĕлне темиçе самолет çеç вĕçсе тухнă.

Пĕлтерÿ

Январĕн 21-мĕшĕнче каçхине 8 сехетре, Советсен Çуртĕн ларусем тумалли залĕнче, Шупашкар хулинчи парти, совет тата общество организацийĕсен В. И. Ленин вилни 19 çул тултарнă ятпа траурлă чаплă ларăвĕ пулать.

Ларăва кĕмелли билетсене ВКП(б) Горкомĕнче, 124-мĕш пÿлĕмре илмелле.

Шупашкар Горсовечĕн Исполкомĕ
ВКП(б) Горкомĕ.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

Çамрăксем хушшинче çар пропагандине вăйлатар

Çар пропаганди комсомолăн отечественнăй вăрçă вăхăтĕнчи тĕп ĕçĕсенчен пĕри пулса тăрать. ВЛКСМ программинче: комсомол çамрăк ăрăва тăван çĕршыва юратакан туса пăхса ÿстерет, тесе çырнă. Комсомолăн нумай çулсем хушшинчи ĕçĕсем ахаль çухалмарĕç. Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче комсомолецсем хăюлăхпа паттăрлăх кăтартаççĕ. Совет Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене илнĕ фронтовиксем хушшинче чăваш комсомолĕ пăхса ÿстернĕ юлташсем те сахал мар.

Вăрçă фрончĕсенче паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнă комсомолец-земляксем çинчен тылри çамрăксене каласа кăтартасси, çамрăк колхозниксемпе рабочисен ĕçри хастарлăхне ÿстерессе çар пропагандин задачи пулса тăрать те ĕнтĕ. Чылай районсенчи комсомол организацийĕсем çар пропагандине начар мар туса пыраççĕ. Ялти комсомол организацийĕсем çамрăксемпе отечественнăй вăрçă участникĕсен, Хĕрлĕ Çар командирĕсемпе боецĕсен тĕлпулу вечерĕсене туса ирттереççĕ. Вăл вечерсенче отечественнăй вăрçă участникĕсем фронтри çапăçусем çинчен, уйрăм комсомолецсен паттăрлăхĕ çинчен каласа пapaççĕ. Отечественнăй вăрçă участникĕсем ĕçре те пример кăтартаççĕ: фронта мĕнпур вăйран пулăшма тăрăшаççĕ тата çавăн пек тума ытти çамрăксене те хавхалантараççĕ. Чкаловски районри «РОКК» колхоз членĕсем — отечественнăй вăрçă инваличĕсем Арлановпа Митрофанов юлташсем самолетсен «Комсомолец Чувашии» эскадрильине тума 10.000-шер тенкĕ, Быков юлташ 5.000 тенкĕ хывнă. Етĕрне районĕнчи колхоз членĕсен пухăвĕсенче отечественнăй вăрçă инваличĕсем тухса каласнă хыççăн боевой самолетсем тума укçа пухас ĕç палăрмаллах вăйланнă.

Çамрăксем хушшинче тăвакан çар пропагандинче лекцисемпе докладсем ирттерни пысăк вырăн йышăнса тăрать. Лекцисемпе докладсене çар темисем тăрăх ытларах ирттермелле, мĕншĕн тесен вăл темăпа çамрăксем интересленеççĕ. Унпа пĕрлех тата отечественнăй вăрçă геройĕсем çинчен, паттăр земляксем çинчен, халăх фронта пулăшни çинчен докладсемпе каласусем ирттерме кирлĕ. Ÿссе çитĕнекен ăрăва вырăс халăхĕ ютçĕршыв пусмăрçисене хирĕç кĕрешнипе, çав кĕрешÿсенчи паллă полководецсемпе те паллаштармалла. Çак тĕлĕшпе штатра тăман лекторсен группине пĕтĕçтерес пулать, отечественнăй вăрçăн участникĕсемпе, Хĕрлĕ Çар командирĕсемпе тата боецĕсемпе усă курас пулать.

Комсомол организацийĕсем вăрçă вăхăтĕнче çар пропагандине чылай вăйлатрĕç пулин те, çак ĕçре çитменлĕхсем те çук мар-ха. Хăшпĕр районсенчи комсомол организацийĕсем, сăмахран, Комсомольски, Советски, Хĕрлĕ Чутай райкомĕсем çар темипе ик-виç докладпа лекци тунипех, отечественнăй вăрçă участникĕсемпе ик-виçĕ хут тĕлпулу туса ирттернипех çырлханса ларнă. ВЛКСМ Ишлей райкомĕ (секретарĕ Серебрякова юлташ) тата Комсомольски райкомĕ (Голланцева юлташ) вырăнти комсомол организацийĕсенче çар пропаганди мĕнле пынине те пĕлмеççĕ, ăна вăйлатас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ. Асăннă районсенче отечественнăй вăрçă инваличĕсем пур пулин те, вĕсене çар пропагандине туса пырас ĕçе явăçтармаççĕ.

Çар пропагандине анлăн туса пыма çар кабинечĕсене организацилени чылай пулăшать. Çар кабинечĕсене кашни шкул, кашни колхоз клубĕ çумĕнчех уçмалла. Вĕсенче çĕнĕ йышши хĕçпăшалсем, Хĕрлĕ Çарăн уставĕсем, приказĕсем пулмалла. Çар ĕçĕпе интересленекен ялти çамрăксем унта кирек мĕнле ыйтупа та ответ илме пултарччăр. Çар кабинечĕсенче отечественнăй вăрçă çинчен калакан материалсенчен фото-бюллетеньсем туса кăларса тăмалла. Çамрăксемпе хĕрачасене çар темиллĕ кино-картинăсене ытларах кăтартмалла, çав картинăсене коллективпа сÿтсе-явмалла. Ялти комсомолецсемпе çамрăксен çар ĕçне вĕренмелли кружокĕсенче Хĕрлĕ Çарăн уйрăм хĕçпăшалĕсемпе усă курма та вĕренмелле.

Шкул ачисене çар ĕçне вĕрентме тытăннă май, çар пропагандине вĕренÿ ĕçĕпе çыхăнтармалла. Çар пропагандине вĕренекенсемпе пионерсем хушшинче туса пыни пирĕн çамрăксенчен тăван çĕршыва юратакан патриотсем, тăван çĕршывшăн чунтан-чĕререн тăракан çынсем пăхса ÿстерме пулăштăр.

Г. ПЕТРУХИН,
ВЛКСМ Обкомĕн секретарĕ.

Наркомпросом Чувашской АССР в городе Чебоксарах организуются **шестимесячные курсы** по подготовке учителей английского и французского языков для V — VII классов НСШ и СШ.

На курсы принимаются лица, владеющие одним из указанных языков в об'еме средней школы, без испытаний.

Принятые на курсы обеспечиваются стипендией и квартирными.

Заявления о зачислении на курсы направлять в Наркомпрос (гор. Чебоксары, ул. Чарнышевского, 5) до 25 января 1943 г.

К заявлению должны быть приложены следующие документы: автобиография и аттестат об окончании средней школы.

Занятия на курсах начнутся с 1 февраля 1943 года.

Наркомпрос ЧАССР.

Сельхозбанкăн Чăваш конторинче ĕçлеме кредитовани тата финансировани инспекторĕсем кирлĕ.

Çак адреспа контора управляющинчен ыйтса пĕлмелле: г. Чебоксары, ул. Карла Маркса, помещение Госбанка, Сельхозбанк.

Улатăрти атă-пушмак фабрикинче ĕçлеме çакăн пек специалистсем кирлĕ: слесарьсем, токарьсем, электромонтерсем, кустарь-сапожниксем, пур квалификациллĕ обувщиксем те, транспорт отделĕнче ĕçлеме лавçăсем, истопниксем, вутă татакан рабочисем, специальность илмен, анчах атă-пушмак çĕлеме вĕренес тесен рабочисем — арçынсемпе хĕрарăмсем.

Фабрикăра столовăй пур.

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: г. Алатырь, Обувная фабрика, ул. Кирова, дом № 1.

Фабрикăри кадрсен отделĕ.

Столовăйĕнче ĕçлеме старши бухгалтер кирлĕ. Çак адреспа главнăй бухгалтертан ыйтса пĕлмелле: Чебоксары, ул. 15 лет Комсомола, дом № 2, телефон 5—03.

Рабочисем кирлĕ. Апат-çимĕç параççĕ. Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: Чебоксары, ул. 15 лет Комсомола, дом № 2, АХО.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, промышленность пайĕн —3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 612 Типография №, Управления полиграф промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф. 6. 58. 84 п.